26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
20
ЭРНЕКУН
166(6403) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 17-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 17-мĕшĕнче пирĕн çарсем БРЯНСК енче çаплах малалла тапăнса пынă, уйрăм участоксенче 4 километртан пуçласа 6 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăнса илнĕ.

Пирĕн СПАС-ДЕМЕНСК районĕнчен тапăнса пыракан çарсем çĕнĕрен малалла куçнă та хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

ХАРЬКОВ енче пирĕн çарсем тăшманăн пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă та чылай участоксенче малалла тапăнса пынă. Çав çапăçусенче хăйсен позицийĕсене чылай лайăхлатнă.

Ытти фронтсенче пирĕн войскăсем çапăçса разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Августăн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 96 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăшманăн 78 самолетне ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Брянск енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăнса илнĕ. Тăшман хаяррăн хирĕç тăрать, анчах та пирĕн чаçсем пыра-пыра çапнипе пĕр позици хыççăн тепĕр позицине хăварса каялла чакать. Пĕр чаçри кавалеристсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ, 600 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн çарсем юханшыв урлă каçнă та тăшманăн тĕреклетнĕ пункчĕсене чылай йышăнса илнĕ. Çав тĕреклетнĕ пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕçсем 2.000 салтакĕпе офицерне пĕтерсе пĕтернĕ, 36 танк, 69 хир тупи, хăй тĕллĕн куçса çÿрекен 10 тупă, 15 миномет, 56 пулемет, 100 автомашина ытла, 8 трактор тата боеприпассен 5 складне пĕтерсе тăкнă.

Дмитровск-Орловский хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Вăйлă çирĕплетнĕ Дерюгино пункчĕшĕн хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Пирĕн саперсем, пехота валли çул тасатса пырса, минăсене тытнă. Старши лейтенант Бурдин подразделенийĕ, пĕтĕм подразделенисемпе пĕрле çав тери хăвăртлăн атакăлана та Дерюгино пунктне йышăнса илнĕ. Çав пункт урамĕсенче тăшманăн 200 вилли ытла выртса юлнă.

Пирĕн Спас-Деменск районĕнче малалла тапăнса пыракан çарсем хаяр çапăçусем хыççăн çĕнĕрен малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ тата хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Кукăçене пирĕн ... çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă, 12 танк тата тĕрлĕ калибрлă 70 тупă персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тăшман йывăр çухатусем тÿсет. Нимĕçсен 589-мĕш пехотнăй полкĕн 2-мĕш батальонĕнчен тыткăна илнĕ ... каласа кăтартнă тăрăх, нимĕçсен 321-мĕш пехотнăй дивизийĕн мĕнпур те 2 батальон кана тăрса юлнă. Совет боецĕсем Малоярославец ятлă тĕреклетнĕ пункта нимĕçсен 59-мĕш мотополкĕн 1-мĕшĕ не 2-мĕш ротисене çаплах пĕтерсе тăкнă. Хаяр çапăçура пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енче пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин контратакисене сире-сире янă.

Харьковран хĕвеланăçнерехри пĕр участокра нимĕçсем пехотăн чылай вăйĕсене тата 100 йывăр танкне яхăн çапăçăва кĕртсе янă. Хаяр çапăçура пирĕн боецсем тăшмана йывăр çухатусем кÿнĕ, нимĕçсене каялла чакма тивнĕ. Çав çапăçусенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 4 пин çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 40 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Пĕр соединени боецĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çавăн чухне вĕсем 900 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. 135 нимĕçе тыткăна илнĕ. «Тигр» йышши 3 йывăр танк, тĕрлĕ калибрлă 18 тупă, 69 пулемет тата винтовкăсем нумай тытса илнĕ.

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн малти отрядсем нимĕç пехотин пĕр батальонне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Батальонăн пĕтĕм хĕçпăшалне тата ăна пулăшма пынă 7 танка тытса илнĕ.

* * *

Житомир облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ августăн 4-мĕшĕнче çĕрле пĕр хулана пырса кĕнĕ. Партизансем хурал тăракан салтаксене пĕр сас-чĕвсĕр вĕлерсе те нимĕç гарнизонне хăрамсăр сасартăк тапăннă. Хаяр çапăçура нимĕçсен 75 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем çыхăну узелне ишĕлтернĕ, 37 автомашина, 70 тонна горючи тата танксем юсакан çар мастерскойне çунтарса янă. Партизансем хула тĕрминче ларнă совет гражданĕсене ирĕке кăларнă.

* * *

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнине каялла чакакан нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем совет хулисемпе ялĕсене çунтараççĕ, пĕтереççĕ, мирлĕ халăха хăйсемпе пĕрле ирĕксĕр хăваласа каяççĕ. Орел облаçĕнчи Свободная Жизнь ятлă яла бандитсем ... Оккупантсем çав яла йышăнсассăн унта нимĕçсен комендантĕ Шмидт пырса вырнаçнă. Вăл ялти колхозниксене пурне те тенĕ пекех çаратса тухнă, вĕсен инвентарьне тата выльăх-чĕрлĕхне нумай туртса илнĕ. Шмидт хресченсен 600 гектар çĕр тытса илнĕ те улпут хуçалăх тунă. Çĕ тухмасан е кашт та пулин «айăпа» кĕрсен Шмидт хресченсене халăх умĕнче хĕртнĕ. Шмидт палачла унăн жандармĕсем хăйсене лăпланман совет çыннисене вĕлернĕ. Фашистла çынсенсем çак ялти Василий Морозова, Михаил Завьялова, Василий Ходенкова тата ыттисене те нумайĕшне персе пăрахнă. Каялла чакас умĕн гитлеровецсем ялти пĕтĕм халăха хăйсен тылне хăваласа кайнă, яла вут тивертсе янă. Пушарта ялти мĕнпур 54 пÿрт кил хуралтисемпе-мĕнĕпех çунса кайнă.

Харьковран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем Северный Донец хулине тытса илнĕ хыççăн ăнăçлăн малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. 800 гитлеровеца çити тата тăшманăн 7 танкне пĕтерсе тăкнă. 2 танк тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Харьков енче пирĕн çарсем, тăшманăн контратакисене çĕнтерсе, çаплах малалла тапăнса пынă.

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене çĕнтерсе пырса, малалла куçнă, халăх пурăнакан пунктсене чылай йышăнса илнĕ. 1.300 гитлеровеца, 29 танк тата тăшман миномечĕсен 8 батарейине пĕтерсе тăкнă. 10 танк, пĕр пысăк продовольстви склачĕ тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Харьковран хĕвеланăçнерехре пĕр соединени боецĕсем, нимĕçсен хаяр контратакисене сирсе ярса, тăшман пехотин батальонне, 13 танк тата 2 транспортер пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсен Попов капитан ертсе пыракан подразделенийĕнчи ушкăнĕ тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă та пĕр «тигр» йышши юсавлă танка унăн экипажĕпе пĕрлех тыткăна илнĕ.

Харьковран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем юханшыв урлă каçнă та татăклăн штурмласа, Змиев хулине йышăнса илнĕ. Çитĕнĕве малалла сарса пырса, совет боецĕсем тăшманăн тĕреклетнĕ пункчĕсене чылай йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1.200 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, минометсен 2 батарейине тата 28 пулемет пĕтерсе тăкнă. 2 танк, 14 миномет, 8 пулемет, боеприпассен 8 складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Гварди лейтенанчĕ Ульянов, танксене пемелли пăшалпа персе, нимĕç танкне пĕтерсе тăкнă, «тигр» йышши тепĕр танкне гранатăпа сиенленĕ. Черниговпа Корниенко бронебойщиксем тăшманăн 3 йывăр танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Спас-Деменск хулинчен кăтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр чаçри боецсем тăшман контратакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче темиçе çĕр тăшман вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем малалла куçса усăллă позицисем йышăнса илнĕ. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна çити вĕлерсе тăкнă. 10 танк, 6 тупă, 61 пулемет, 19 миномет пĕтерсе тăкнă. Зенитнăй артиллери тăшманăн 9 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем тăшманăн 112 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Артиллерипе миномет подразделенийĕсем нимĕçсен 28 дзотне тата 7 блиндажне ишĕлтернĕ, минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă, тăшманăн бронепоездне сиенленĕ. Пĕр чаçăн разведка тăвакан ушкăнĕсем тăшман пехотине пĕр взвода çити пĕтерсе тăкнă. Пономарев лейтенант командир пулса ертсе пыракан снайперсен ушкăнĕ 25 талăк хушши засадăра ларса, 199 гитлеровеца вĕлернĕ. Старши сержант Александр Бутенко 22 нимĕçе, ефрейтор Илья Никитин—19, сержант Николай Рыбкин—18, ефрейтор Виталий Смирнов—16 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Карели фронтĕнче Дворниковпа Черненький лейтенантсем командир пулса ертсе пыракан разведчиксемпе автоматчиксен подразделенийĕсем юханшыв урлă каçнă та пĕр утрав çине пырса кĕнĕ. Утрав çинче тăшманăн çирĕплетнĕ пункчĕ пулнă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене сасартăк атакăланă та штык вĕççĕн пулса иртнĕ тытăçура тăшман гарнизонне çĕмĕрсе тăкнă, тăшманăн 100 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Пирĕн боецсем пĕр тупă, радиостанци тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Орел облаçĕнчи партизансен отрячĕ çак юлашки кунсенче нимĕçсен 4 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 4 паровоз, боеприпассем турттарса пыракан 16 вагон тата çарсем тиенĕ 25 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Пирĕн разведчиксем вагонсем ванчăкĕсем айĕнчен гитлеровецсем хăйсен вилнĕ е аманнă 400 яхăн салтакĕпе офицерне туртса кăларни çинчен пĕлсе килнĕ. Çав отрядри партизансемех нимĕçсен уйри аэродромне кĕрсе кайнă. Вĕсем унти 2 самолет çинчен 2 пулемет, 1.500 патрон тата 2 парашют илнĕ те самолечĕсене иккĕшне те çунтарса янă.

* * *

Урамсенче пулса иртнĕ хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем августăн 16-мĕшĕнче Жиздра хулине нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатни çинчен пĕлтернĕччĕ. Çав кунах каç енне Жиздра хулине таврари вăрмансенче пытанса пурăннă хула çыннисем таврăнма пуçланă. Вĕсем нимĕç ирсĕрĕсем хулана çав тери ишĕлтерсе тата çаратса хăварнине курнă. Гитлерла ирсĕрсем хулана пĕтĕмĕшпех ишĕлтерсе пĕтернĕ. Вăрçă пуçланиччен Жиздра хулинче 15.000 çын пурăннă, 2.000 çурт пулнă. Халĕ хула çынсăр тăрса юлнă, пур çĕрте те ишĕлчĕк куписем кăна. Нимĕçсем хулари пĕтĕм йывăç çуртсене çунтарса, чул çуртсене сирпĕнтерсе янă. Усал вăрă-хурахсем шкулсене, библиотекăсене, больницăсене, киносене çаратса, пĕтерсе тăкнă. Шыв паракан башньăсене тата çăлсене ишсе антарнă е сирпĕнтерсе янă. Çавăн пекех гитлеровецсем хулари чиркÿсене тата хула соборне ишсе антарнă. Жиздра хулинчи тата таврари ялсенчи халăха нумайĕшне чурасемпе суту тăвакан фашистсем Германие каторгăна хăваласа кайнă, вĕсен пурлăхне çаратнă. Анчах та темĕнле хăратнă, темĕнле пусмăрланă пулин те, хулари халăхран пĕр пайĕ, çывăхри вăрмансене тарса, Германири каторгăна илсе каясран хăтăлса юлнă.

Хулара митинг пулса иртнĕ. Митингра хулана ирĕке кăларнă боецсемпе офицерсем усал тăшмана вăл совет çĕрĕнче тунă мĕнпур ирсĕр преступленисемшĕн те хаяррăн тавăрма тупа тунă.

Пирĕн авиаци Брянск, Рославль, Славянск чугунçул узелĕсене, Барвенково станцине тата тăшман аэродромĕсене тапăнни

Августăн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци тăшманăн 1-мĕш Брянск, 2-мĕш Брянск, Рославль, Славянск чугунçул узелĕсенче тата Барвенково станцинче тăнă çар эшелонĕсем çине, çавăн пекех тата çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула пушарсем нумай тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Чугунçул çинчи эшелонсем, боеприпассемпе горючи склачĕсем çуннă, сирпĕне-сирпĕне кайнă.

Çав каçах пирĕн авиаци нимĕçсен самолечĕсем пухăнса тăнă аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă. Самолетсем вĕççе хăпармалли тата самолетсем тăмалли вырăнсенче, çавăн пекех тата аэродромсен сооруженийĕсем хушшинче бомбăсем çурăлни палăрнă. Тăшман самолечĕсене 60 самолетран кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Çавăн пекех пирĕн самолетсем тăшманăн Харьковран кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пухăнса тăнă войскисемпе техники çине бомбăсем пăрахнă.

Боевой заданирен 2 самолет таврăнман.

Тăрăшса ĕçлеççĕ

ВАРМАР, августăн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче, вăрнарсен чĕнĕвне сÿтсе-явнă май, уборка ĕçĕсен хăвăртлăхĕ ÿссе пырать. «Париж Коммуни» колхоз членĕсем, вăрнарсем чĕнсе каланине ырласа, куллен тухăçлăн, лайăх ĕçлеме сăмах пачĕç:

— Эпĕ,—тет фронтовик арăмĕ, Смирнова юлташ,—иртнĕ çулсенче, упăшка килте чухне, 60—70 ĕçкунĕ тăвааттăмччĕ. Кăçал эпĕ ку таранччен 130 ĕçкунĕ турăм, ялхуçалăх çулĕ вĕçлениччен 250 ĕçкунĕнчен кая мар тăватăп.

Колхозра Смирнова юлташ пек тăрăшса ĕçлекенсем сахал мар. Халĕ 29 колхозница нормăна кашни кун 200 процент тултарса пыраççĕ. Нахукова, Александрова, Яковлева, Степанова юлташсем ыраш вырнă çĕрте кăна 50-шар ĕçкунĕ тунă.

Колхозниксем тăрăшнипе пула ĕнтĕ унта уборка ĕçĕсем ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Колхоз тырă вырса пĕтерчĕ, государствăна тырă памалли графика кашни 5 кунтах ирттерсе тултарать. Юлашки 5 кун хушшинче 138 центнер тырă памалла пулсан, колхоз 173 центнер панă.

Августăн 17-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тырăсене 30 гектар акнă.

М. И.

ХЕРЛĔ ЯЛАВЛА БАЛТИКА ФЛОЧĔ. Тăшманăн шыва пăрахнă минисене тупса шывран туртса кăларас ĕçе ăнăçуллăн туса пынăшăн, суднăсен караванĕсене лайăх сыхласа пынăшăн Н-ски карапа Гвардейски ят панă. Ÿкерчĕк çинче: Минăсене тытса çиеле кăларакан хатĕре карап çинчен шыва яраççĕ.

Б. ЛОСИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланас умĕн

Çутĕç работникĕсен канашлăвĕ

Августăн 16—17-мĕшĕсенче халăха çутта кăларас ĕçри работниксен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу Чăваш республикинчи шкулсен отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсем тата 1943—44 çулхи вĕренÿ çулĕн задачисем çинчен сÿтсе-яврĕ. Ку ыйтупа канашлура çутĕç халăх комиссарĕ Макаров юлташ доклад туса пачĕ.

Республикăри шкулсем вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. Уйрăмăнах Канаш, Улатăр, Шупашкар хулисенчи, Вăрмар, Сĕнтĕр, Ишлей районĕсенчи шкулсем лайăх результатсем пачĕç. Ишлей районĕнчи Шетмĕпуçĕнчи туллимар вăтам шкул (директорĕ Никитина юлташ) 5-мĕш çул ĕнтĕ РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тытса тăрать.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ çывхарса килет. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче пуçламĕш (1—4-мĕш) классенче вĕренекенсем парттăсем хушшине лараççĕ, аслă (5—10-мĕш) классенче вĕренекенсем октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕренме тытăнмалла.

Чылай шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитнĕ. Шкул çуртĕсене юсанă, хĕл каçмалăх вутă турттарнă, учебниксем туяннă. Вăрмар, Шупашкар, Калинино районĕсенчи, Шупашкар, Улатăр хулисенчи шкулсем вĕренÿ çулĕ пĕтнĕ хыççăнах шкул çуртĕсене юсама тытăннă. Çавăнпа та халĕ вĕсем вĕренĕве пуçăнма хатĕр.

Шупашкар районĕнчи Çĕньялти туллимар вăтам шкула çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленме ялсовет председателĕ тата Çĕньялти колхоз председателĕ активлăн пулăшнă. Колхоз хăй вăйĕпе шкул çуртне юсанă, шкул валли шыв тытмалли баксемпе витресем туса панă. Шкул ачисемпе колхозниксем валли ată-пушмак юсама колхозра мастерской пулать. Кунсăр пуçне колхоз шкула 4 гектар çĕр, 3 сысна çури панă. Учительсемпе шкул ачисем те колхоза тимлĕн пулăшаççĕ. Вĕсем каникул пуçланнăранпах колхоз производствинче ĕçлеççĕ. Ку таранччен 4.196 ĕçкунĕ тунă.

Çавăн пекех Калинино районĕнчи шкулсем те вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитнĕ. Кăçал шкулсенче 4.944 ача вĕренмелле. Районри шкулсем 3.241 кубометр вутă хатĕрленĕ. Вăл шутран çуррине турттарнă. Шкул ачисемпе учительсем 1000 çынна çити уйхир ĕçне хутшăннă. Кĕçĕн классенче вĕренекенсем отрядпа ĕçлеççĕ. Вĕсем 519 гектар çинче пучахсем пухнă.

Анчах та республикăри шкулсен директорĕсемпе заведующийĕсем пурте мар-ха вĕренÿ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Красноармейскри (директорĕ Боброва юлташ), Йĕпреçри (директорĕ Остроумов юлташ), Çĕрпÿ районĕнчи Чурачăкри вăтам шкулсем вĕренÿ çулне хатĕрленес енĕпе сÿреккĕн ĕçлеççĕ.

Докладчик Макаров юлташ тата пренире тухса калакансем шкулсен ĕçĕнчи чылай çитменлĕхсене кăтартса пачĕç.

Республикăра ачасене пурне те шкула явăçтарас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Иртнĕ çулта всеобуч планне 86 процент кăна пурнăçланă. Шкул çулне çитнĕ çамрăксем чылайĕшĕ шкул тулашĕнче тăрса юлнă. Уйрăмах Шăмăршă, Пăрачкав, Красноармейски, Елчĕк районĕсенче ĕç начар пулнă. Халĕ шкулсем валли вутă хатĕрлес ĕç те вăраххăн пулса пырать.

Шкулсем валли учебниксем кăларас ĕç юлса пырать. Августăн 12-мĕшĕ тĕлне 12 тĕрлĕ учебник кăна кăларнă. Учебниксене вырăнсене çитерес тĕлĕшпе Чăвашсоюз тата сельпосем васкамаççĕ. Ручкăсем, линейкăсем, ещĕксем туса кăларас енĕпе Чăваш АССР Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕпе промкоопераци управленийĕ ку таранччен те тивĕçлипе ĕçе тытăнман.

Канашлура тухса калакансем кадрсемпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. Педагогика тата учительсен институчĕсенчен вĕренсе тухнă студентсем хăшпĕрисем колхозсенче урăх специальноçсемпе ĕçлеççĕ. Çамрăк учительсем хăйсен пĕлÿлĕхĕсене ÿстерессишĕн çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Çитес вĕренÿ çулĕнче шкул ачисене çарпа физкультура ĕçне вĕрентессине тĕппĕрех лайăхлатас пулать. Анчах та паянхи куна 141 шкулта военруксем çитмеççĕ. Пăшал пемелли тирсем 132 çĕрте пулмалла, халĕ 48 çĕрте кăна пур. Çавăн пекех спортплощадкăсем 293, çар хатĕрĕсен кабинечĕсем 526 кăна туса йĕркеленĕ. Чылай районсенче нагляднăй пособисем çитмеççĕ.

Пренире Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Матвеев, унăн заместителĕ Евлампьев, Çутĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ майор Корольков, учитель-орденоносецсем — Багров тата Васильева, Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ шкулĕн директорĕ Сергеева, Шăхасан вăтам шкулĕн директорĕ Нимаков, Комсомольски райçутĕç пайĕн заведующийĕ Коновалова, Вăрмар райçутĕç пайĕн заведующийĕ Павлов, ВЛКСМ Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Токарев тата ытти юлташсем те тухса каларĕç.

Канашлу вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртса хăварчĕ тата республикăри мĕнпур учительсене кăçал тата та хĕрÿллĕнрех ĕçлеме чĕнсе каларĕ.

Комсомолецсем общежитисене йĕркене кĕртеççĕ

ЙĔПРЕÇ, августăн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак çулхи май уйăхĕнче комсомол организацисем пуçарса пынипе рабочисем пурăнакан общежитисене тасатса йĕркене кĕртес тĕлĕшпе Пĕтĕм Союзри уйăхлăх пулса иртрĕ.

Районри комсомол организацисем çак уйăхлăха хутшăнса общежитисене тирпейлес тĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕç. «Кооплеспром» артелĕнче ĕçлекен комсомолецсем ку тĕлĕшпе ятарласа комисси уйăрнă. Çав комисси пуçарăвĕпе кунта 4 пÿлĕмĕн стенисене шуратнă, çĕнĕ пукансем тунă, общежити патне çÿремелли кĕпере юсанă т. ыт. те.

Предприятисенчи комсомол организацисем çак уйăхлăхăн опытне малалла та вăйлатсах пыраççĕ. Халĕ кашни предприятирех комсомолецсем ертсе пынипе уйрăм комиссисем ĕçлеççĕ. Çак кунсенче пĕтĕмпе 7 общежити юсанă. Ку ĕçре 45 комсомолец ĕçленĕ. Вĕсем общежити стенисене штукатурка тунă, кăмакасене шуратса тирпейленĕ, çĕнĕ 10 пукан, 3 сĕтел тунă, çуртсен умĕсене тасатнă.

А. РУБЦОВА.

Пур тĕрлĕ уйхир ĕçĕсене те тĕрĕс çыхăнтарса пырар

Вырнă тырра çийĕнчех çыхса, кĕлтесене капана хывар. Витнĕ итемсемпе усă курса, пĕр чарăнмасăр авăн çапар, государствăна тырă татти-сыпписĕр парса тăрар

Каçхине кĕлте йатса капана хываççĕ

УЛАТАР, августăн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Августăн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем кĕлтесене йатса капана хывма уя тухрĕç. 200 колхозник икĕ ушкăна уйăрăлса вĕсем малтанах палăртса хунă участоксенче ĕçе тытăнчĕç.

Вăрнар районĕнчи колхозниксен чĕнĕвĕ кашни колхозникĕн чĕрине кĕнĕ. Тырпулсене ăнăçлăн та хăвăртрах пухса кĕртессишĕн, государствăна тырă памалли обязательствăсене срокчен пурнăçласа, Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама тивĕç илессишĕн кĕрешӳ пырать.

Каç. Хирте фронтри пек ĕç вĕрет. Тӳпери тулли уйăх уйхире, унта ĕçлекенсене, Капрановăпа Кузьмина юлташсем ертсе пыракан звеносен хĕрлĕ флажокĕсене çутатать. Ку звеносем арçын вăйĕсĕрех капан тăваççĕ. Кашни колхозница маттур ĕçлет. Кăнтăрла махорка çинче ĕçленĕ колхозниксемпе колхозницăсем те кĕлте йăтма тухнă. Вĕсем халĕ капан хывнă çĕрте пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ.

Шура Лукошкинăпа Галя Прокопьева кункаçах хĕрсе ĕçленĕ. Анчах вĕсем те канма каймарĕç. Вĕсем яслире çĕрлехи сменăра ĕçлеме кăмăл турĕç. Яслире ĕçлекенсем, дежурнайсăр пуçне, пурте комсомолецсен бригадипе хире кĕлте йăтма тухрĕç. Комсомолецсемпе çамрăксен Шура Уралева юлташ ертсе пыракан бригади хастарлăн ĕçлерĕ.

Комсомолецсемпе пĕрле капан хывакан мастер ватă колхозник Курбатов юлташ пулчĕ. Вăл ĕçре пример парса пырать. Ывăннине пĕлмесĕр капан хывать.

Каçхи ĕç шурăмпуç киличченех пычĕ. Çак каç колхозниксем 30 гектар çинчи тырра капана хыврĕç.

А. ШУЛЬМАН.

Ӳкерчĕк çинче: Ишлей МТС-ĕн трактористсем хирте кăнтăрлахи апат тăваççĕ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Хĕрсе авăн çапаççĕ

ЕТĔРНЕ. Кĕçĕн Чутайри Тельман ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи тырăсене 7 ĕç кунĕнче, çурхи тырăсене 8 ĕç кунĕнче вырса пĕтерчĕ. 95 гектар çинчи кĕрхи тырăсене капана хывнă та ĕнтĕ.

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн боевой приказĕпе хавхаланса тата хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çар фронтра наступлени туса пыни çине ответлесе, колхозниксем уборкăра нихăçанхи пек мар тухăçлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте ăнса пулнă тырра кĕске срокра тата пĕр тăкаламасăр пухса кĕртсе, чи малтан çапнă тырра государствăна парас, нимĕç оккупанчĕсемпе паттăррăн çапăçакан Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕмĕтпе хавхаланса ĕçлеççĕ. Кашни колхозникех ĕç нормине 130 процентран кая мар пурнăçласа пырать. Уйхир ĕçĕнче ваттисем те, çамрăккисем те тимлĕн ĕçлеççĕ. Ирина Капитонова фронтовик амăшĕ, 73 çулта ĕнтĕ. Апла пулин те, вăл ĕçре çамрăксенчен юлмасть. Ĕç нормине 153 процент таран тултарса ĕçлет.

Иванов юлташ ертсе пыракан бригада яланах малта пырать. Ку бригадăра звеносемпе ĕçлессине аван йĕркеленĕ. Ĕçрен таврăнас умĕн бригадир е звеновод кашни колхозник талăкра миçе ĕçкунĕ ĕçлесе тунине каласа парать. Ку колхозниксен ĕçлес хастарлăхне татах та хăпартать. Бригадăпа бригада, звенопа звено, колхозникпе колхозник ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăрту итогĕсене кăтарту хăми çине çырса пыраççĕ. Социализмлă ăмăрту стахановецсен йышне ӳстерме пулăшрĕ. А. Тимофеева, П. Ильина, П. Александрова, Д. Майорова тата ытти юлташсем те уборкăра ĕç нормине кулленех 200—250 процент тултарса ĕçлерĕç.

Колхоз правленийĕ те колхозниксем валли лайăх условисем туса панă. Ача яслийĕ халĕ йĕркеллĕ ĕçлесе пырать. Ĕçлекенсене кунне икĕ хутчен уйрах апатлантараççĕ.

Халĕ Тельман ячĕпе тăракан колхоз хĕрсех авăн çапать, кĕрхи тырăсем акать. Государствăна тĕштырă парса татнă.

Е. УСМАН.

Комбайнерсем ĕçре

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, августăн 17-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Чкалов облаçĕнчи малта пыракан комбайнерсемпе трактористсен чĕнĕвĕ çине ответлесе, МТС-ри комбайнерсемпе трактористсем кăçал тырă пухса кĕртес ĕçре пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме пулнă. Ефремов комбайнер, трактор бригадин бригадирĕ Афондеркин юлташсем кашни комбайнпа тырă вырмалли плана 200 гектар пурнăçласа обязательство илнĕ. Кунсăр пуçне, вĕсем комбайнпа ĕçлеме пĕрер çынна вĕрентсе хатĕрлеме пулнă.

Халĕ вĕсем çак обязательствăсене тимлĕн пурнăçласа пыраççĕ. Ефремов юлташăн планпа 90 гектар вырмалла пулсан, вăл халĕ 80 гектар, Афондеркин юлташ 70 гектар тырă вырса пухнă. Афондеркин юлташ комбайна ĕçлеме Яндуткина юлташа вĕрентсе çитерчĕ. Яндуткина юлташ халĕ тĕп комбайна хăй тĕллĕнех ĕçлесе пырать. Комбайнерсем 300 гектар çинчи тырра пухса кĕртнĕ.

Паянхи куна МТС-ăн 7 комбайнĕ ĕçлет.

Х. ЛИСИН.

Кĕраки юлса пырать

ШАХАÇАН, августăн 18-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Районри колхозсен кăçал кĕрхи тырăсем пурĕ 10.600 гектар акмалла. Августăн 16-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе те 830 гектар кăна акнă, çакă вăл 7,5 процент пулать. 67 колхозран 22-шĕ августăн 16-мĕшĕ тĕлне кĕракине пачах та тухман, вĕсен шутне «Париж Коммунĕ», Ильич ячĕпе тăракан, «Майăн 1-мĕшĕ», «Оборона», «Красный трактор», «Правда» тата ытти колхозсем те кĕреççĕ.

Асăннă колхозсем акма вăрлăхсем хатĕрлемен. Авăн çапассине кирлĕ пек йĕркелемен пула, вĕсем государствăна та халĕ тырă пама тытăнман-ха.

Районри çĕрĕç пайĕ çак колхозсен ĕçĕпе сахал интересленет. ВКП(б) райкомĕ те вĕсем çине тивĕçлĕ пек çавăрăнса пăхмасть.

В. ВЕСЕЛОВ.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЕ КĔРАКИ ТАВАС ĔÇ АВГУСТĂН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Кĕрхи тырăсем акни
Ишлей	21,4
Етĕрне	19,1
Чкаловски	15,5
Калинино	14,0
Элĕк	14,2
Улатăр	13,2
Кувакино	12,9
Шăмăршă	12,4
Шупашкар	11,9
Первомайски	10,9
Октябрьски	10,8
Советски	9,5
Вăрмар	9,4
Вăрнар	9,0
Комсомольски	8,6
Пăрачкав	7,5
Шахасан	7,5
Сĕнтĕр	7,3
Сĕнтĕрвăрри	7,1
Хĕрлĕ Чутай	6,4
Канаш	4,9
Елчĕк	4,3
Куславкка	3,8
Пĕрĕс	3,5
Çĕрпӳ	3,1
Шăмăршă	3,1
Тăвай	3,1
Красноармейски	0,4
Шупашкар хули	—
ЧАССР тăрăх	9,5
августăн 10-мĕшĕ тĕлне	1,2

Комбайнсемпе начар усă кураççĕ

ПАРАЧКАВ, августăн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсен кашни кунах пĕр пин гектар тырра пуçтарма пултараççĕ. Анчах халĕхи вăхăтра кунсерен 500—600 гектар çеç пуçтараççĕ.

Уборка сĕрĕк пыни ĕçе япăх организаципе килет.

Районра комбайнсемпе начар усă кураççĕ. Унта 23 комбайнран 13 комбайн çеç ĕçлеççĕ. Комбайнсем ĕçлени кĕрĕлле ĕçлеççĕ. Вăл уйрăм колхозсен çĕрĕсене лайăх курăнать. «Восход» колхозра 6 трактор, 2 комбайн пур. Вĕсемпе августăн 15-мĕшĕнче пурĕ те 4 гектар кăна тырă вырнă. Кашни кунах е трактор, е комбайн ĕçлемест. Машинăсемпе усă курассин ытти колхозсенче те çавăн пекех пулса пырать.

Колхозсенче дисциплина начар. «Ударник», «Париж Коммуни», «Красный Восход», «Правда» тата ытти чылай колхозсенче ĕçе ирхине 8—9 сехетре тухаççĕ те каçхине ир таврăнаççĕ. Çантăлăка курса ĕç вăхăтне тĕрĕс йĕркелемеççĕ, кун тăршшĕпех ĕçлеме организацилемен. Çапла, «Передовик» колхозра пĕрремĕш кунах 50 колхозник алла пухса ĕçленĕ, ... 50 колхозник алăпа тырă вырнă.

Районри çĕрĕç пайĕ уборка ĕçне упонломоченнăйсем урлă çеç ертсе пырать. Анчах вĕсем пурте ĕç çинче мар. Агроном Кузнецов юлташ хăйĕн участокне начар пулăшать.

Пăрачкавсем начар ĕçлениие витменле сăлтав та çук. Районри партипе совет организацийĕсем руководительсен уборка ĕçне хăвăртлатма тĕллĕ тăватсăр, халĕ мĕн тултаракан ĕçсене пышăнмалла.

ВЦСПС-па Халăх Комиссарийĕсенче

ВЦСПС тата ССР Союзĕн Совнаркомĕ çумĕнчи Главснаблес Пĕтĕм Союзри çĕнтерӳллĕ ăмăртăвĕн 1943 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă, Чăваш республикинчи управленине (начальникĕ Хохлов юлташ) иккĕмĕш премине памалла тунă.

* * *

ВЦСПС тата Ащ-какайпа çĕт-çу промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕн совхозсен Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăвĕн—вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçне 1943 çулхи иккĕмĕш кварталти, уйăхри итогне 1943 ... сулăн малтанхи çурçулх пăхса тухса, шултăра вылăх-чĕрлĕх енĕпе çак совхоз тĕпĕлне пĕрен республикăри «Марпосадский» совхоза (директорĕ Моисеев юлташ) виççĕмĕш премине памалла тунă.

* * *

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕ промышленноçăн пĕр отраслĕн заказĕсене пурнăçлакан заводсен Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăвĕн 1943 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводне иккĕмĕш премине памалла тунă.

Ютçĕршывсенче

Сицили утраве çинче вăрçă ĕçĕсем пĕтнĕ

ЛОНДОН, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен Сицили çыранĕсем тăрăх кăнтăр енчен куçса пыракан 8-мĕш армийĕн чăçĕсем Мессина хулинче Америка çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Утрав çинче тăшман хирĕç тăрасси пĕтĕмĕшпех пĕтсе ларнă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: тăшман Сицилирен Италие Мессина проливĕ урлă тарма пуçланăранпа союзниксен самолечĕсем тăшман çарĕсене турттаракан 306 суднăна пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Союзниксен Сицилире кĕрешнĕ самолечĕсем июль уйăхĕнче, кашни самолет пĕрре вĕçсе кайнине шутласан, тăшман çине мĕнпурĕ 12.500 хутчен вĕçсе кайнă. Бомбăсем пуринчен те ытла Мессина çине тăкнă, мĕншĕн тесен Мессина хулин сывлăшран тапăнассинчен хӳтĕлекен оборони Ватасĕр-тинĕс районĕнче чи вăйлă пулнă.

АНГЛИПЕ АМЕРИКА ШТАБ ПУÇЛĂХĔСЕН КАНАШЛĂВĔ

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Квебекран çапла пĕлтерет: паян Британин имперски генеральнăй штабĕн пуçлăхĕ генерал-лейтенант Алан Брук, тинĕс штабĕн пуçлăхĕ адмирал Дадли Паунд тата сывлăш-çар вăйĕсен штабĕн пуçлăхĕ авиаци маршалĕ Чарльз Портал Америка штабĕсен пуçлăхĕсемпе пĕрле канашлу туса ирттернĕ. Канашлу нумайччен пынă. Унсăр пуçне, Англин, Америкăн тата Канадăн çар штабĕсен ытти членĕсем те пĕрлешӳ тĕл пулса калаçнă.

НОРВЕГИРЕ ОСАДНАЙ ПОЛОЖЕНИ ТУНА

СТОКГОЛЬМ, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин радиовĕ Норвегире осаднăй положени туни çинчен пĕлтерет.

Германин Норвегири оккупациллĕ çарĕсен командующийĕ Фалькенхорст кăларнă приказра каланă тăрăх, Норвеги офицерĕсен пысăк пайĕ Германи шанчăкне тӳрре кăларман, вĕсем Германие хирĕç вăрçас шутпа Норвегирен тухса тарнă. Офицерсем нумайĕшĕ Германие хирĕç ĕçлекен вăрттăн организацисенче тăраççĕ. Çавăн пирки Гитлер Норвеги офицерĕсене пурне те Германие тыткăна илнисен лагерĕсене куçарма хушнă, Норвегире нимĕçсемпе пĕр майлă пулса ĕçлекеннисене кăна хăварма каланă.

Швецин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: августăн 16-мĕшĕнче нимĕçсен приказне итлеменшĕн Осло хулинчи граждан полици отделенийĕн пуçлăхне Гуннар Эйлифсона персе пăрахнă.

Квислингăн полици «министрĕ» Ионас Ли Норвегири полицейскисене çапла пĕлтернĕ: оккупациллĕ влаçсене «çителĕклĕ» пăхăнса пымасан, кашни полицейские çав Эйлифсон шăпи пырса тивет, тенĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: иртнĕ çĕр Англи авиацийĕ Турин хули çине пырса бомбăсем пăрахнă.

Августăн 16-мĕшĕнче Америкăра Англи бомбардировщикĕсем тăшманăн Францири аэродромĕсемпе авиаци площадкисене тапăннă.

Америка авиацийĕ Италире чылай аэродромсене атакăланă.

АМЕРИКАНЕЦСЕН СУТУ-ИЛУ СУДНИСЕНЕ АНГЛИЕ ПАНИ

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, хĕçпăшала кивçен е арендăна памалли çинчен калакан закона пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен администраци çакна пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Англие çав асăннă закон тăрăх «Либерти» йышши суту-илу суднисене параççĕ. Çав суднăсемпе Англи хăй флагне çакса усă курать. Анчах та вăл суднăсем Пĕрлешӳллĕ Штатсен пурлăхĕнче шутланса тăраççĕ, çавăнпа та вăрçă пĕтсен Англин вăл суднăсене США-на каялла тавăрса памалла. Малтанхи даннăйсем тăрăх, Англие çавăн пекки 200 суднă панă. Вĕсен пĕтĕмĕшлĕ водоизмещенийĕ 2 миллион тоннăна çитет. (ТАСС).

ГЕСТАПОВЕЦСЕМ ТУРИ САВОЙĂРА ШВЕЙЦАРИ ЧИНОВНИКНЕ АРЕСТЛЕНĔ

Швейцари хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, августăн 9-мĕшĕнче гестаповецсем швейцарецсен Анмассăри (Тури Савойя) паспорт бюровĕн начальникне арестленĕ те Лион хулине илсе кайнă. Швейцари влаçĕсем Берлинпа Вишире çав чиновнике мĕн пирки арестлени çинчен каласа пама ыйтнă. (ТАСС).

Италири лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Киассоран (Италипе Швейцари чиккинче) пĕлтернĕ тăрăх, унта çакăн пек хыпарсем çитнĕ: ĕнер Миланри рабочисем демонстраци тунă. Демонстрантсем халех вăрçа пĕтерсе лартма ыйтнă. Пур çĕрте те хĕçпăшаллă патрульсем тăратса тухнă пулин те, демонстрацири халăх хула урамĕсемпе пĕр хăрамасăр пынă. Союзниксен авиацийĕ пырса пăрахнă бомбăсенчен тухнă пушарсем демонстраци тунă вăхăтра çаплах çунса тăнă, вĕсене сӳнтерме ĕлкĕреймен.

Бомбăсем татах пырса пăрахассинчен хăраса, Миланри халăх пинĕпинĕпе хуларан тухса урăх çĕре куçать.

ЛОНДОН, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Италин чи пысăк 6 хулинче: Римра, Туринра, Неапольре, Генуяра, Миланра тата Флоренцире каллех демонстрацисем тума тытăннă. Демонстрацисене тухнă халăх мир тума ыйтать. Халĕ демонстрацисемпе стачкăсем пĕтĕм Итали çĕршывĕпе анлăн сарăлса пыраççĕ.

Италипе Швейцари хушшинче телеграфпа телефон ĕçлеме пăрахнă.

Рузвельт Квебека пынă

КВЕБЕК, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕ Рузвельт паян Квебека килнĕ. Унпа пĕрле Гарри Гопкинс килнĕ. Рузвельта Черчилль, Маккензи Кинг тата Канада генерал-губернаторĕ хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Пĕлтерӳ

Паян, августăн 20-мĕшĕнче, каçхине, 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски урам, 6) Сталин юлташăн «Совет Союзĕн аслă отечественнăй вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе 1-мĕш тема тăрăх пропагандистсен, кружоксемпе калаçусене ертсе пыракансен тата консультантсен семинарĕ пулса иртет.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РСФСР НАРКОМЗЕМĔН СĔНТĔРВĂРРИНЧИ ÇĔРЙĔРКЕЛӲПЕ МЕЛИОРАЦИ ТЕХНИКУМĔ

çĕрйĕркелӳ тата гидротехника отделенийĕсен пĕрремĕш курсĕсене студентсем илесси çинчен пĕлтерет.

Гидротехника отделенийĕ вăтам образованиллĕ гидротехниксене хатĕрлет. Отделенирен çак ĕçсене: гидротехника сооруженийĕсем, пĕвесем, пĕверен ытлашши шыва юхтармалли шăтăксем, çавракa тата шахтăллă çăлсем тăвас тĕлĕшпе шыравсене туса ирттерес, проектсем хатĕрлес тата çав сооруженисене туса лартас ĕçсене, шурлăхлă çĕрсене типĕтес, тип çĕрсене шăварас, искусственнăй йĕркепе çумăр çутарас, çĕре тарăн тата тарăнмар пăраласа шăтарас, çавăн пекех тата колхозсемпе совхозсем тата МТС-сем валли шыв пăркисемпе гидроэлектростанцисем лартас ĕçсене лайăх пĕлекен гидротехниксем вĕренсе тухаççĕ.

Çĕрйĕркелӳ отделенийĕ çĕрйĕркелӳ техникĕсене хатĕрлет. Ку отделенирен çак ĕçсене лайăх пĕлекен çĕрйĕркелӳ техникĕсем вĕренсе тухаççĕ: ялхуçалăх карттисем тумашкăн, çул мĕнле туса каймалли проектсем тумашкăн, промышленность сооруженийĕсемпе пурăнмалли çуртсем лартма кирлĕ проектсем тумашкăн вырăна тăрăхла тата çӳлелле ӳкерсе илес ĕçĕн геодези техникине (теодолитпа тата мензолпа ӳкерсе илессине), нивелировка тăвассине лайăх пĕлекенсем, çавăн пекех тата МТС-сен, совхозсен, колхозсен хуçалăхлă центрĕсем валли çĕр уйăрса парса планировка туса пама лайăх пĕлекенсем вĕренсе тухаççĕ.

Техникумра виçĕ çул вĕренмелле.

Техникума 15 çулхи çамрăксенчен пуçласа 35 çула çитнĕ çынсене, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Заявленисене сентябрĕн 25-мĕш числиччен илеççĕ. Заявленисемпе пĕрле çак документсене памалла: вĕренсе тухни çинчен калакан удостоверени, сывлăх çинчен врач панă справка, автобиографи тата сăн ӳкерчĕкĕсем иккĕ.

1941, 1942 тата 943 çулсенче туллимар вăтам шкултан „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене, çавăн пекех тата вăтам шкулăн 8-мĕш, 9-мĕш тата 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене Техникумăн 1-мĕш курсне испытанисемсĕрех илеççĕ. Испытанисĕрех Хĕрлĕ Çартан таврăннисене илеççĕ, вĕсем туллимар вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисенчен кая мар пĕлеççĕ пулсан; ыттисене пурне те экзаменпа илеççĕ. Экзаменсем сентябрь уйăхĕн 25—30-мĕш числисенче пулса иртеççĕ, вĕсем çак предметсемпе пулаççĕ: математика, вырăс чĕлхи, СССР Конституцийĕ. Çав предметсене туллимар вăтам шкулта вĕрентекен программăра кăтартнинчен кая мар пĕлмелле.

Вĕренме илнисене пурне те общежитие вырнаçтараççĕ, çывăрмалли хатĕрсем параççĕ.

Вĕренме илнĕ отличниксене тата экзаменсене пур предметсем тăрăх та „отлично" паллăпа панисене государство стипендине параççĕ.

Вĕренме октябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче тытăнаççĕ.

Техникумăн адресе çапла: гор. Мариинский Посад, Чувашской АССР, улица Ленина, дом № 3, Техникум землеустройства и мелиорации.

ТЕХНИКУМ ДИРЕКЦИЙĔ.

СĔНТĔРВĂРРИНЧИ ЛЕСОТЕХНИКА ТЕХНИКУМĔ.

1943 — 44-мĕш вĕренӳ çулĕ умĕн студентсем илесси çинчен пĕлтерет. 1-мĕшпе 2-мĕш курса илеççĕ.

Ку техникум ĕлĕкхи икĕ техникум вырăнне пулса юлнă. Пĕр техникумĕ вăл — 1895 çулта уçăлнă вăрман техникумĕ, тепри — йывăçа механикăлла каскалас ĕçе вĕрентнĕ техникум, 1904 çулта уçăлнăскер. Хăйсен вăхăтĕнче çав техникумсем 2200 специалист вĕрентсе кăларнă. Вĕсем вăрман хуçалăхĕнче, вăрман хатĕрлес ĕçре тата йывăç каскалас ĕçре халь те Совет Союзĕн тĕрлĕ вырăнĕсенче ăнăçлăн ĕçлеççĕ.

Техникумра вĕрентекенсем — пысăк квалификациллĕ педагогсем. Техникумăн вĕренӳ кабинечĕсем питĕ пуян, хăйĕн-электростанци пур. Техникумăн подсобнăй хуçалăхĕ те питĕ вăйлă.

Техникум çак специальноçсене пĕлекен техниксене хатĕрлет: вăрман хатĕрлес ĕçе пĕлекен техник-технологсене, йывăç çурас тата йывăç каскалас ĕçе пĕлекен техник-технологсене, вăрман хуçалăхĕ тĕлĕшпе ĕçлекен техниксене тата шăрпăк тăвас ĕçе пĕлекен техник-технологсене.

Техникумра виçĕ çул вĕренмелле.

Техникума арçынсене те, хĕрарăмсене те илеççĕ, 14 çулхи çамрăксенчен пуçласа 35 çула çитнисене, 1-мĕш курса туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ, 2-мĕш курса вăтам шкулăн 8-мĕш, 9-мĕш тата 10-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Туллимар вăтам шкултан тата 7-мĕш класран 1943 çулта вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ, çавăн пекех отличниксене те экзаменсăрах илеççĕ.

Вĕренме кĕме паракан заявленисене август уйăхĕн 25-мĕш числиччен илеççĕ. Заявленипе пĕрле çак документсене памалла: хăçан çуралнине пĕлтерекен свидетельство, вĕренни çинчен калакан свидетельство, сывлăх çинчен врач панă справка, автобиографи (мĕнле те пулин учреждени алă пусса çирĕплетмелле) тата 60 пуслăх почта маркисем.

Вĕренме сентябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Студентсем валли общежити пур, выртса тăма вырăн минтерсем параççĕ. Студентсем валли хăйне уйрăм столовăй пур.

Адрес çапла: гор. Мариинский Посад, Чувашской АССР, Майская ул., дом № 30, Лесотехнический Техникум.

ТЕХНИКУМ ДИРЕКЦИЙĔ.

Яланхи ĕçре ĕçлеме çакăн пек СЛУЖАЩИСЕМ КИРЛĔ: подсобнăй хуçалăх пуçлăхĕ, ялхуçалăх производствине пĕлекен главнăй агроном, зоотехник, аслă бухгалтер, бухгалтер-ревизор, секретарь-машинистка.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Плеханов урамĕ, 7-мĕш номерлĕ çурт (кил-хушшинче).

Строительствăна çакăн пек РАБОЧИСЕМ КИРЛĔ: платниксем, каменщиксем, çĕр чавакансем, шыв пăрки хуракансем тата ытти специальноçсемпе ĕçлекенсем те.

Тата çакăн пек СЛУЖАЩИСЕМ КИРЛĔ: снабжени отделĕн пуçлăхĕ, бухгалтерсем, счетоводсем тата ыттисем те.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Калинин урамĕ, строительство контори.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 16-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

ЛЕРМОНТОВ

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççе: 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

ПРИНЦ И НИЩИИ

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Шупашкарти кинотеатрта

августăн 14-мĕшĕнчен пуçласа кашни ытларикун, кĕçнерникун, шăматкун тата вырсарникун сеанссем пуçланас умĕн фойере çар чаçĕн духовой оркестрĕ калать.

Пуçламăшĕ 19 сехет те 15 минутăра тата 21 сехет те 15 минутăра.

ШУПАШКАРТИ ЭНЕРГЕТИКА ТЕХНИКУМĔ

1943—44-мĕш вĕренӳ çулĕ умĕн 1-мĕш курса вĕренекенсем илесси çинчен пĕлтерет. Дизель, электричество тата строительство отделенийĕсене илеççĕ.

Техникумра 3 çул та 4 уйăх вĕренмелле.

Техникума туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнă СССР гражданĕсене илеççĕ, 15 çулхи çамрăксенчен пуçласа 35 çул тултарнă çынсене çитиччен. Туллимар вăтам шкултан 1941, 1942 тата 1943 çулсенче „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ, ыттисене испытанипе илеççĕ. Испытанисем çак предметсемпе пулаççĕ: вырăс чĕлхи, математика, физика, СССР Конституцийĕ, географи.

Вĕренме кĕме паракан заявленипе пĕрле çак документсене памалла: а) автобиографи, б) вĕренни çинчен илнĕ свидетельство (подлинникĕ).

Заявленисене сентябрь уйăхĕн 10-мĕш числиччен илеççĕ.

Испытанисем сентябрь уйăхĕнче пулаççĕ: 15-мĕш числара пуçланаççĕ, 20-мĕш числара пĕтеççĕ.

Вĕренме октябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Техникумра вĕренекенсем валли столовăй, общежити пур. Выртса тăма минтер-вырăнсем параççĕ.

Ыйтса пĕлмелли тата заявленисемпе документсем ямалли адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 23 (3-мĕш № шкул çуртĕ.)

2—1

ĔÇ РЕЗЕРВĔСЕН УПРАВЛЕНИНЕ çак специальноçсене пĕлекенсем васкавлăн кирлĕ: главнăй бухгалтер, бухгалтер-ревизор тата экономист.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Советсен çурчĕ, 4-мĕш хут, 409-мĕш пӳлĕм. Телефон 1—66.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1807 Типография №1 Управления полиграф, промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.